• *Юбилей*

# Хĕвел пек çутă çын вăл, Сементер!



Хĕвел пек çутă çын вăл, Сементер!
Хĕвел пек ăшă çын вăл, Сементер!

Сементерпе хăçан тата епле паллашнине аса илме тăрăшатăп та – аса илейместĕп. Ахăртнех, эпĕ университетра вĕренме пуçласан, пĕр-пĕр çĕнĕ сăвă е калав çырсан, çав сăвва /сăвăсене/, çав калава /калавсене/ пĕтĕм халăх чунтан юратакан «Ялав» редакцине йăтса кайсан, çав журналăн редакторĕ патне хăюсăррăн кĕрсен... Паллах, тĕп редактор мана /ытти çĕр-çĕр çамрăка кĕтсе илнĕ пекех/ ăшшăн, ырă сунса кĕтсе илнĕ, ăшă сăмахсемпе хавхалантарнă. Юрий Сементер хăйне урăхла тытма пултарайман. Хăйне урăхла тытсан /сахал-им пирĕн мăн кăмăллă «гени-çыравçăсем»?/ вăл Сементер те пулмастчĕ.

Унтанпа нумай вăхăт иртрĕ.

Тем те турăмăр, таçта та çитрĕмĕр эпир çак хушăра Юрий Сементерпе...

Куç умне тухнă аса илӳсене кăна асăнам.

Çĕнĕ хваттер илсен /1994 çул/ эпир, мăшăрăмпа иксĕмĕр, Юрий Семеновичпа мăшăрне /тăпру çăмăл пултăр, Руфина Яковлевна!/ хăнана чĕнтĕмĕр. Сементер ун чухне пирĕн пата «Вельтмейстер» баян йăтса килчĕ. Эпĕ, юратнă поэтăмăр баян калама пултарнине пĕлменскер, тĕлĕннипе хытса кайрăм.

Еплерех уяв туса пачĕ пире ун чухне Сементер!..

1999 çул. Çеçпĕлĕмĕрĕн вил тăприне упракан Остĕр хули /Украина/ 900 çул тултарнине паллă тума хатĕрленет. Остĕртан кашни сехетре тенĕ пекех шăнкăравлаççĕ: «Килетĕр-и?.. Килмеллех!.. Килмесен сире, чăвашсене, кунта тĕрĕс мар ăнланаççĕ!..»

Каймаллах. Кампа каймалла? Паллах, Сементерпе!.. Кайрăмăр – укçа çуккине, чикĕсем урлă каçма йывăррине пăхмасăр... Çитрĕмĕр. Саламларăмăр Остĕр халăхне. Çеçпĕл вил тăприйĕ çине чĕрĕ чечексем хутăмăр... Чăваш ятне ямарăмăр. Тавах, Юрий Семенович!

2001 çул. Хусан. Тутарстан хăйĕн чаплă поэчĕ Ренат Харис çуралнине паллă тăвать. Хисеплĕ хăнасен шутĕнче – Мустай Карим, Р.Бикбаев, К.Аралбаев /Ĕпхӳ/, В.Кузнецов куçаруçă /Мускав/ тата Юрий Сементерпе эпĕ.

Пире Хусан консерваторийĕн концертсен пысăк залĕпе паллаштарчĕç, орган итлеттерчĕç... Унтан, чей ĕçнĕ чухне, Кадим Аралбаев пушкăрт юррине чуна пырса тивмелле шăрантарчĕ, ун хыççăн Фоат Галимуллин тутар юррине тăсса ячĕ. Иккĕшĕ те питĕ чаплă юрларĕç. Эпĕ Юрий Сементер куçĕнчен тинкертĕм: «Çăлсам, Сементер, чăваш халăхĕн чысĕпе ыр ятне!..» Вара Юрий Семенович «Кĕтӳç» юрра шăрантарчĕ.

* * *

Кăçалхи кăрлачăн 2-мĕшĕнче Юрий Семенович Сементер çуралнăранпа 70 çул çитрĕ.

Совет /Раççей/ çарĕн полковникĕ те, генералĕ те пулма пултарнă Сементер. Çук, вăл хăй валли ĕмĕрлĕхе чăваш поэзине, чăваш литературине, чăваш поэчĕн тумхахлă çулне суйласа илнĕ. Шухăшласа пăхар-ха самантлăха та пулин: Юрий Сементерсĕр чăваш поэзийĕ – чăваш поэзийĕ-и? Çук, паллах, çук!

Сементер вăл – пысăк Поэт, поэтюрăç /«Уçланкăри палан» юрă кăна мĕне тăрать!/, пултаруллăран та пултаруллă куçаруçă /вырăссен «Слово о полку Игореве» поэмине чăвашла кам куçарнă? Паллах, Сементер!/... Сементер – халăхсен туслăхне çирĕплетессишĕн ырми-канми ĕçленĕ /«Туслăх» орденпа сăвăçăмăра ăнсăртран чысламан/, çамрăк çыравçăсене çунат сарма питĕ нумай пулăшнă çын.

Чи пахи: Юрий Сементер – Питĕ Лайăх Çын! Пĕтĕм чăваш халăхĕ юратакан, сума сăвакан сăвăç!

Паян Чăваш наци библиотекинче Чăваш халăх поэчĕн Юрий Сементерĕн пултарулăх каçĕ иртет.

70 çул тултарнă ятпа пурте саламлатпăр сана, юратнă юлташăмăр, ĕçтешĕмĕр, вĕрентекенĕмĕр! Нумай пурăн, нумай ĕçле! Тата нумай сăвă çыр, нумай кĕнеке парнеле хăв чунтан юратакан халăхна.

■ **Валери ТУРКАЙ**